23-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 ОКТЯБРЬ 9 ЫТЛАРИКУН 196(6947) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

СССР Верховный Совечĕн суйлавĕ

Ĕнер политика тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк вырăн йышăнса тăракан государство актне пичетлесе кăларнă. ССР Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕ «СССР Верховный Советне суйласси çинчен» Указ кăларнă.

Указра çапла каланă:

«Вăрçă пĕтнĕ май тата СССР-ăн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн полномочийĕсен срокĕ тухнă май, «СССР Верховный Советне суйламалли положенин» 72-мĕш статьинче СССР Верховный Советне суйламалли кун çинчен суйлавсем пуçланиччен икĕ уйăхран кая юлмасăр пĕлтермелле тата суйлавсене канмалли кун ирттермелле тесе каланă тăрăх, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕ çапла йышăнать:

СССР Верховный Советне 1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче вырсарникун суйламалла тăвас».

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăр лару-тăру суйлавсене вăхăтра ирттерме май памарĕ. Вăрçă пирĕн çĕнтерÿпе пĕтни лару-тăрăва тĕпрен улăштарчĕ. Халĕ пирĕн халăх Совет государствин Верховный органне суйлама хатĕрленме тытăнать.

Отечественнăй вăрçăн хаяр кĕрешĕвĕсенче пирĕн халăх хамăрăн Советлă тăван государствăна, хамăрăн социализмлă аслă демократине паттăррăн хÿтĕлесе хăварчĕ.

Вăрçă фрончĕсенчи йывăр тĕрĕслевре те, тылри ĕçре те совет çыннисене Тăван çĕршыва, чи малта пыракан ирĕклĕ совет стройне хĕрÿллĕн юратни пулăшса тата хавхалантарса пычĕ. Халăх хăйне сывăх, революциллĕ кĕрешÿсенче хăй çĕнтерсе илнĕ халăхăн совет влаçĕсĕр Тăван çĕршыв пулма пултарассине шутламан та. Пирĕн социализмлă аслă держава ĕмĕр-ĕмĕр пурăнтăр, ÿссе çирĕпленсе пытăр тесе, пирĕн Тăван çĕршывăн иншер шанчăклă ывăлĕсемпе хĕрĕсем хăйсен пуçĕсене хучĕç, хăйсен юнне тăкрĕç.

Вăрçă пирĕн çĕнтерÿпе пĕтрĕ. Совет халăхĕ фашистла вăрă-хурахсем татнă творчествăллă ĕçе тытăнать. Вăрçă тĕрĕслевĕсенче Совет государствин никам çĕнтерейми пурнăç вăйĕ палăрчĕ. Совет халăхĕн тĕрĕс ĕçĕ çĕнтерчĕ. Совет халăхĕ вăрçăра та, экономикăра та тата моральпе политика тĕлĕшĕнчен те тăшмана çĕнтерчĕ.

Фашистла агрессорсене хирĕç кĕрешнĕ вăхăтра тĕнчери чи демократиллĕ советлă социализмлă государствăн çирĕплĕхне тĕрĕсленĕ. Чи пысăк хăрушлăх вăхăтĕнче те вăл нимĕн иккеленмесĕр çирĕп тытăнса тăчĕ. Хамăрăн советлă Тăван çĕршыва хÿтĕлес тесе, Совет Союзĕнчи халăхсем питĕ вăйлă та туслă çемьене пĕрлешсе çĕкленчĕç. Рабочисем, хресченсем, интеллигентсем хамăрăн Тăван çĕршывăн чыслăхне, ирĕклĕхĕне никама пăхăнманлăхне хÿтĕлесе хăварас тесе, Ленин—Сталин партийĕ тавра, Сталин юлташ ертсе пыракан хамăрăн правительство тавра тата та таччăнрах пĕтĕçрĕç. Çак иртнĕ вăрçăра Хĕрлĕ Çар пек паттăррăн, хăюллăн çапăçса тăшмана çав тери ăста пырса çапма пултарнă урăх çар тĕнчере пулман та. Сталинграда, Ленинграда, Севастополе хÿтĕлекенсем пек, Кенигсбергпа Будапешта, Берлинпа Венăна илекенсем пек массăллăн паттăрла ĕçсем тунă халăх тĕнчере урăх пулман та, халĕ те çук.

Пирĕн совет демократийĕ—чи малта пыракан демократи, чи тăташах пыракан демократи—совет государствин çирĕплĕхĕпе паттăрлăхĕн çăлкуçĕсенчен пĕри пулса тăчĕ. Совет çĕршывĕнче халăх хăйĕн кунçулне хăй татса парать. Халăхăн ывăлĕсемпе хĕрĕсем мĕнпур çĕршывĕпех Советсен ĕçне, пирĕн влаçăн органĕсен ĕçне ертсе пыраççĕ.

Сакăр çул каярах совет халăхĕ Сталинла Конституци тăрăх СССР Верховный Совечĕн 1-мĕш созыври депутачĕсене суйларĕ. Пурте, пĕртан, тÿррĕн тата вăрттăн сасăласа суйлани уя чухне коммунистсемпе партире тăманнисен блокне питĕ пысăк çĕнтерÿ тума май пачĕ. Халăх суйласа лартнă çынсем, пĕтĕм халăхăн аслă çулпуçĕ Сталин юлташ пуçлулса тăнипе, çав иртнĕ вăхăтра ĕççыннисен кĕрешĕвĕпе ĕçне ертсе пычĕç.

1937 çулхи декабрĕн 12-мĕшĕнче пулса иртнĕ пĕтĕм халăх суйлавĕ умĕн Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ суйлавçăсене çапла чĕнсе каларĕ:

«Хамăрăн Тăван çĕршыва малашне те хăватлă, культурăллă тата ирĕклĕ социализмлă держава кам тăвас тет, çав большевиксен партийĕшĕн сасăлĕ, çав коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлĕ».

Большевиксен партийĕ пирĕн çĕршыва социализм çĕнтермелле тăвассишĕн, халăх телейĕшĕн тата хамăрăн Тăван çĕршыва чечеклентерессишĕн кĕрешнин итогĕсене истори енчен пăхса тухнă май, ВКП(б) Центральный Комитечĕ çав чĕнсе каланинче çапла каланă: «Çавăнпа та ĕнтĕ большевиксен партийĕ пулас суйлавсенче хăйне халăх шанассине ĕненсе тăрать».

Совет государствин тата социализмлă обществăн 20 çул хушшинчи строительство опытне, парти политики тĕрĕс пулнине ĕненнĕ совет халăхĕ хăйĕн сассине коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕн кандидачĕсемшĕн пачĕ. СССР Верховный Совечĕн суйлавĕнче коммунистсемпе партире тăманнисен блокĕшĕн 90 миллиона яхăн суйлавçă, урăхла каласан, суйлава хутшăннисен 98,6 проценчĕ сасăланă.

Халăх Ленин—Сталин партине çирĕппĕн шанса тăрать. Большевиксен партийĕ вара çав шанчăка тÿрре кăларчĕ. Пирĕн çĕршыва вăл халăх хуçалăхĕпе культурăн пур отраслĕсене аталантарас тĕлĕшпе те, Совет Союзĕн вăрçăри вăй-хăватне çирĕплетес тĕлĕшпе те çĕнĕрен çĕнĕ çĕнтерÿсем патне шанчăклăн илсе пычĕ. Гитлерла Германи Совет государствине вăрă-хурахла тапăннă вăхăт тĕлне пирĕн çĕршыв вăрçăпа экономика тĕлĕшĕнчен хăватлă çĕршыв пулнишĕн, гитлеровецсем килсе тапăннине тытса чарма çеç мар, гитлеровецсен вăрă-хурахла çарне аркаса тăкма, ăна пĕр çăмахсăрах парăнтарма пултарнăшăн пирĕн çĕршывăн партипе халăхăн аслă çулпуçне Сталин юлташа, большевиксен мухтавлă партине тав тумалла.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче совет халăхĕ парти политики тĕрĕс пулнине ытларах та ытларах ĕненсе пычĕ. Вăрçă пуçламĕшĕнчех пирĕн ĕçсем анăçсăр пулнă пулин те, пирĕн халăх хамăрăн партие, хамăрăн тăван правительствăна çав тери шанса тăчĕ. Германие аркатса тăкас тесе, вăл жертвăсем тăвассинчен хăраса тăмарĕ. Чи палăрса тăракан наци тата Совет Союзĕнчи тăванла мĕнпур халăхсене ертсе пыракан вăй пулса тăракан вырăс халăхĕ Ленин—Сталин партийĕ ертсе пыракан Совет правительствине çирĕппĕн шанса тăчĕ. «Вырăс халăхĕ Совет правительствине çавăн пек шанса тăни вара историллĕ çĕнтерÿ тума, этемлĕх тăшманне—фашизма çĕнтерме май паракан татăклă вăй пулса тăчĕ» (И. Сталин).

Вăрçă вăхăтĕнче большевиксен партийĕ фашистла захватчиксене хирĕç кĕрешме мĕнпур халăха хавхалантарса тата организацилесе пычĕ. Вăл малта пыракан марксистла-ленинла наука теорине пăхăнса пырса, хальхи вăрçăн законĕсене уçса пачĕ, çĕнтерÿллĕ аслă вăрçăн идейисемпе халăха хавхалантарчĕ, халăхăн çĕнтерÿ тумалли çулне кăтартса пачĕ. Парти миллионшар совет çыннин ĕçне организацилерĕ, ăна пĕр тĕллеве—тăшмана аркатса тăкас тĕллеве ярса пычĕ. Хамăрăн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешекенсен пуçĕнче, Хĕрлĕ Çарăн, партизан отрячĕсен малти речĕсенче, тылри ĕç çарĕн малти ретĕнче коммунистсем, Ленин—Сталин партийĕн ывăлĕсемпе хĕрĕсем пычĕç.

СССР Верховный Советне халăх суйланă чи малтанхи çын вăл—Сталин юлташ пулнă. Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Генералиссимусĕ Сталин юлташ этемлĕх историйĕнчи чи аслă вăрçăра пирĕн çара, пирĕн халăха чи пысăк çĕнтерÿ патне илсе пычĕ. Германипе Япони захватчикĕсене пĕтĕм тĕнчипе историлле çĕнтернĕшĕн пирĕн халăхăн чи малтанах ăна тав тумалла. Тĕнчери чи хăватлă державăсенчен пĕри пулса тăракан Совет государствин пĕтĕм тĕнчери авторитечĕпе мухтавĕ ÿснĕшĕн пирĕн халăхăн ăна тав тумалла.

Отечественнăй аслă вăрçăра çĕнтерни вăл—советлă социализмлă демократин çĕнтерĕвĕ, ССР Союзĕн Сталинла Конституцин—тĕнчери чи демократиллĕ конституцин çĕнтерĕвĕ пулса тăрать. Халăх суйласа лартнă çынсем фронтра та, тылра та совет çыннисен шутсăр нумай отрячĕсене ертсе пырса, хăйсене шанса панă ĕçе тÿрре кăларчĕç. Советсен мĕнпур депутачĕсем Сталин юлташ панă наказа çирĕп пăхăнса пычĕç. Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнче суйлав умĕнхи суйлавçăсен пухăвĕнче каланă сăмахра Сталин юлташ халăх суйласа лартнă çынсене хăйсен ĕçĕнче аслă Ленинăн примерне пăхăнса пыма чĕнсе каларĕ. Вăрçă вăхăтĕнче Совет Союзĕн государство деятелĕсем, Ленин пекех, çапăçура хăраса тăман, халăх тăшманĕсене çав тери курайман, Ленин пекех, алхапăлланса ÿкмен, тÿрĕ чĕреллĕ те тÿрĕ ĕçлĕ пулнă, Ленин пекех, хамăрăн халăха çав тери юратнă, Сталин пекех, хамăрăн халăха халĕ те юратаççĕ.

Советлă социализмлă демократин, халăхăн советлă государствин вăй-хăвачĕ пирĕн çĕршыв пурăнса ирттернĕ вăрçă вăхăтĕнчи хаяр тĕрĕслевсенче питĕ вăйлăн палăрчĕ. Халĕ мĕнпур халăхăн вăйхăватне мирлĕ строительствăн задачисене татса панă çĕре янă вăхăтра та совет демократийĕн творчествăллă вăйĕ лайăх палăрса тăрать. Пирĕн халăх малашнехи сине шанчăклăн та çирĕп пăхса тăрать. Вăл пĕтĕм тĕнчери историллĕ çĕнтерĕвĕн тырпулне вырса илессе шанать, вăл вăрçă кÿрсе хăварнă суранĕсене кĕске вăхăтрах тÿрлетсе пĕтерессине шанать. Çакăн хыççăн вара совет çĕршывĕ сивче ирĕклĕ, телейлĕ, пуян та культурăллă пурнăç татах та вăйлăраххăн чечекленессине ĕненсе тăрать. Большевиксен аслă партийĕ, аслă Сталин пирĕн халăха пур-нăçăн пур пайĕсенче те çĕнĕрен çĕнĕ çитĕнÿсем тăвасси патне ертсе пырассĕ.

(«Правда» хаçатăн октябрĕн 7-мĕшĕнчи умстатьи)

Октябрь уйăхĕ—государствăна тырă, çĕрулми, пахчаçимĕç парса татмалли тата авăн çапса пĕтермелли уйăх

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇ ОКТЯБРĔН 5-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Капан хывнă	Авăн çапнă	Çĕрулми кăларнă	Вăрлăхлăх курăк пухнă
Улатăр	85,2	57,5	1,1	29,3
Элĕк	91,9	66,1	72,5	94,5
Вăрнар	96,4	74.5	65,3	100,0
Йĕпреç	89.7	70.9	40,1	53.5
Ишлей	89,0	72,6	53,6	100,0
Калинино	97,9	71.4	78,7	70.5
Канаш	85,2	68,1	26.9	42.5
Куславкка	85,2	71,7	36.6	100,0
Комсомольски	86,7	59,0	58,3	52,2
Красноармейски	98.1	70.5	72,5	56,1
Хĕрлĕ Чутай	90,1	63,6	67.8	91,6
Кувакино	81,4	60,8	8.5	63,2
Сĕнтĕрвăрри	86.7	64,2	41,5	35,8
Муркаш	80.1	66,0	33,8	100,0
Октябрьски	96,7	77,4	44,6	37,4
Первомайски	92,1	65,1	63,8	70,6
Пăрачкав	83,4	57,1	5,1	22,5
Советски	94,0	60,5	59,6	53.6
Сĕнтĕр	84,2	67,2	64,2	100,0
Вăрмар	88,3	67,4	66,1	53,7
Çĕрпÿ	93,3	74,6	77,3	100,0
Шупашкар	89,1	77,8	52,3	93,9
Чкаловски	98,3	62,8	91,2	83,6
Чурачăк	95,8	67,4	73,2	100,0
Шăмăршă	99,2	78,0	97,0	100,0
Шăхасан	91,8	66,7	68,9	94,8
Çĕмĕрле	85,9	59,9	41,7	72,0
Етĕрне	100,0	59,4	68,6	91,2
Елчĕк	97,5	63,1	94,0	100,0
Тăвай	86,6	72,1	38,2	37,0

Хĕрлĕ Çар фондне тырă параççĕ

КÿКЕÇ, октябрĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри 101 колхозран 42 колхоз государствăна тырă парса татнă. Нумай колхозсем çĕрулми тата пахчаçимĕç те парса татрĕç. Государствăна тырă парса татнă колхозсем планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă параççĕ. «Победа» колхоз 120 пăт, «Правда» колхоз 240 пăт, Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз 100 пăт ытла панă та ĕнтĕ.

Анчах та хăшпĕр колхозсем çаплипех юлса пыраççĕ-ха. Уйрăмăнах Шурчакасси ял Советне кĕрекен колхозсем государствăна тырă парас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Кунта ял Совечĕпе те государствăна тырă памалли плана 48 процент кăна тултарнă. Каганович ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Антонов юлташ) паянхи кун тĕлне те государствăна тырă памалли плана 56 процент çеç тултарнă. Тыра парас ĕç çакăн пек начар пыни кунта пĕтĕмпех кĕлте турттарас тата авăн çапас ĕçе кунĕн-çĕрĕн туса пыманнинчен килет. Кунта авăн çапма ирхине çутăлсан тин тытăнаççĕ, тĕттĕм пулаччен пăрахаççĕ. Транспорт бригади те Заготзерно пунктне кунне пĕр хут кăна тырă леçет. Колхозра авăн çапасси час-часах çумăр пулнă пирки чăрăнать. Колхозра икĕ авăн пур, вĕсемпе усă курмаççĕ.

Çавăн пекех «Хочахмат» колхозра (председателĕ Никитина), «Актив» колхозра (председателĕ Васильева), государствăна тырă парас ĕç начар пырать. Çак колхозсем государствăна тырă памалли плана пурĕ те 50—60 процент кăна тултарнă.

Т. ЛОГИНОВ.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТĂВАС ĔÇ ОКТЯБРĔН 5-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Кĕрхи çĕртме тунă
Çĕрпÿ	66,9
Красноармейски	56,4
Октябрьски	54,4
Вăрмар	54,2
Чурачăк	52,9
Чкаловски	50,5
Вăрнар	49,9
Шупашкар	49,6
Куславкка	49,4
Сĕнтĕрвăрри	47,6
Сĕнтĕр	47,1
Етĕрне	45,3
Ишлей	43,6
Елчĕк	42,5
Калинино	40,6
Шăхасан	36,6
Элĕк	33,2
Муркаш	31,0
Шăмăршă	25,3
Тăвай	25,3
Хĕрлĕ Чутай	24,8
Первомайски	24,7
Канаш	24,6
Комсомольски	24,2
Йĕпреç	24,1
Советски	22,2
Улатăр	20,0
Çĕмĕрле	18,4
Пăрачкав	13,8
Кувакино	12,4

МАЛТАНХИ ТИВĔÇЕ ПУРНĂÇЛАРĔÇ

Октябрьски районри «Красный танк», «Звезда», «Волгарь», «Молния», «Первое мая», «Красный труженик», «Самолет», Сталин, Буденный, Горький ячĕсемпе тăракан колхозсем государствăна тырă парса татрĕç. Этнескерти Горький ячĕпе тăракан колхоз государствăна çĕрулми те парса татнă.

Авăн çапса пĕтернĕ колхозсем

ИШЛЕЙ. Районри «Первое мая», Свердлов ячĕпе тăракан, «Дружба» колхозсем авăн çапса пĕтернĕ. Свердлов ячĕпе тăракан колхозра Палкин колхозник молотилкăпа темиçе çул хушши барабанщикра ĕçлет. Вăл машинăна тасатсах тăрать, вăхăтра сĕрет тата тĕрĕслет. Унăн молотилки нихăçан та çĕмĕрĕлсе ĕçсĕр ларман. Куллен авăн çапмалли нормăна 200—250 процент тултарса пынă.

«Клевер» колхоз паян-ыранах авăн çапса пĕтерет. Ку колхозăн 3 молотилка ĕçлет. Бригадăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. 1-мĕш бригада малта пырать. Ку бригадăра машинист К. Бардасов кулленхи нормăна 150 процент тултарать. 2-мĕш бригадăри машинист М. Кочергов, 65 çулхискер, Бардасовран юлмасть: кулленхи нормăна 120—130 процент тултарать. Ворошилов ячĕпе тăракан, «Красный воин», «Ыраш», «Красный Октябрь» колхозсем кĕлте турттарса капан хывса пĕтернĕ.

Государствăна çĕрулми параççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. «Большевик» крахмал заводне Красноармейски, Ишлей, Элĕк, Çĕрпÿ, Калинино тата Чурачăк районĕсенчи колхозсенчен вĕçĕ-хĕррисĕр çĕрулми лавĕсем килсе тăраççĕ. Кунта çĕрулмие кăнтăрла кăна мар, каçхине те пĕр чарăнмасăр йышăнаççĕ. Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне Красноармейски районри колхозсем 722 тонна, Ишлей районĕнчи колхозсем 159 тонна, Элĕк районĕнчи колхозсем 77 тонна, Çĕрпÿ районĕнчи колхозсем 182 тонна, Калинино районĕнчи колхозсем 37 тонна тата Чурачăк районĕнчи колхозсем 144 тонна çĕрулми пырса панă. Пĕр кун хушшинче кăна заводра 133 тонна ытла çĕрулми йышăннă.

Красноармейски районри «Красный Борденер» колхозăн государствăна 164 центнер çĕрулми памалла, вĕсем 185 центнер парса плана ытлашшипех тултарнă. Çавăн пекех Ильич, Войков ячĕсемпе тăракан, «Свобода», «Сила» тата «Новое хозяйство» колхозсем те государствăна çĕрулми памалли плана ытлашшипех тултарнă.

Çав вăхăтрах Молотов ячĕпе тăракан тата «Родина» колхозсем государствăна çĕрулми парас тĕлĕшпе чăтма çук начар ĕçлеççĕ. Ку колхозсем октябрĕн 2-мĕшĕ тĕлне государствăна пĕр килограмм та çĕрулми паман.

Е. ПОРФИРЬЕВ.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç сÿрĕк пырать

ШĂХАСАН. «Трактор» колхоз (председателĕ П. Евлампьев) кĕрхи çĕртме туса пĕтерчĕ. «Новая жизнь», «Çĕнĕ Мамири Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем те ыран-паянах çĕртме тумалли плана тултараççĕ. «Заря», «Активист», «Прожектор», «Красный партизан», Чкалов, Молотов ячĕсемпе тăракан колхозсем те çĕрме сухи тăвас тĕлĕшпе лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем плана 60—70 процент тултарнă.

Анчах районĕпе илсен, кĕрхи çĕртме тăвас ĕç çаплипех сÿрĕккĕн пырать. «Правда», Максим Горький ячĕпе тăракан колхозсем паянхи куна çитсе те кĕрхи çĕртме тума тухман. Çĕртме тумалли плана сентябрĕн 3-мĕшĕ тĕлне «Красный луч», «Акатуй», «Орешино», «Сосновка» колхозсем 3—9 процент çеç тултарнă. Кĕрхи çĕртме тăвассипе «Красный трактор», «Чуваш ЦИК», «Канаш», «Свет», «Комсомол» колхозсем те юлса пыраççĕ. Кĕрхи кунсем пуçланчĕç. Çĕр шăнас вăхăт çывхарса килет. Апла пулин те, юлса пыракан колхозсем кĕрхи çĕртме тума васкамаççĕ.

Çĕртме тăвас ĕçе хăвăртлатмалла.

В. ВАРБУСЬ.

Совет çĕршывĕ тăрăх

ДЖАМБУЛ ДЖАБАЕВА АСĂНСА

АЛМА-АТА. Казах ССР-ĕн Совнаркомĕ Казахстанри халăх акынĕн Сталинла премин лауреачĕн, виçĕ орден илнĕ Джамбул Джабаева ĕмĕрлĕхе асăнмалла тăвас тесе, уйрăм постановлени йышăннă.

1946 çулта Алма-Атара тата Джамбул Джабаев пурăннă аулта памятниксем лартаççĕ. Джамбул ячĕпе тăракан колхозра туллимар вăтам шкулăн çуртне тăваççĕ, Алма-Атара аслă акын ячĕпе Писательсен çуртне тăваççĕ. Джамбулăн çĕнĕ çуртĕнче литература музейĕ тума йышăннă. «Отлично» вĕренекен студентсене пама Джамбул ячĕпе ултă стипенди уйăрнă. Кунсăр пуçне, унăн ячĕпе икĕ преми тунă. Вĕсене лайăх произведенисем çырнăшăн кашни çулах парса пымалла.

1946 çулта Джамбулăн мĕнпур произведенийĕсене казахла тата вырăсла пичетлесе кăларма йышăннă. (ТАСС).

ХУЛА-КРЕПОСТЬ

КРОНШТАДТ, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Вăрçă кÿрсе хăварнă суранĕсене Кронштадт çыннисем хăвăрттăн тÿрлетсе пыраççĕ. Хула вăрçăччанхи сăн-сăпата йышăнать. 4.000 тăваткал метра яхăн пурăнмалли çуртйĕре юсанă. Нумай çуртсене çĕнĕрен сăрланă. Халĕ çулсемпе проспектсене юсаççĕ.

Кино-театрсен, шкулсемпе больницăсен çĕнĕ çурчĕсене тума пăлартнă. Хулари поликлиникăна тата грязелечебницăна тĕпрен юсама тытăннă.

Ÿкерчĕк çинче: Киев хулин тĕп урамне пĕтĕмпех асфальт сарса тухнă, урам урлă каçнă чух таптасран хăтăлмалли вырăнсем туса хунă.

Г. УГРИНОВИЧ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

БЕЛОРУССИРЕ ТЕЛЕФОН КĔРТЕС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫНИ

МИНСК, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Белоруссин столицине облаçсенчи тата районсенчи пур центрсемпе те телефон линийĕне çыхăнтарнă. Минск, Витебск тата Барановичи облаçĕсенче пур МТС-сене те тата нумай ял Совечĕсене телефон кĕртнĕ.

БОРИСОГЛЕБСК 300 ÇУЛ ТУЛТАРАТЬ

Кăçал Борисоглебск хулин никĕсне хывни 300 çул тултарать.

XVII-мĕш ĕмĕрĕн малтанхи çур пайĕнче вырăс государствине тутарсем килсе тапăннă пирки Мускав воевочĕсен государство чиккисенче çирĕплетнĕ хуласем тумалла пулнă. Çавăн пек хуласем шутне 1645—1646 çулсенче тума пуçланă Борисоглебск хули те кĕрет.

XVII-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче I-мĕш Петр Воронеж хулинче тинĕс-çар карапĕсем тума тытăнсан Борисоглебск хули çав карапсене тумалли вăрман хатĕрлекен центр пулса тăнă.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче Борисоглебскра политика кружокĕ организациленĕ, каярахпа вăл вара социал-демократсен рабочисен группи пулса тăнă. РСДРП-ăн Борисоглебскри группин пуçарăвне В. И. Ленин «Хура сотнĕсем тата восстанисем организацилесси» ятлă статьяра пысăк хак панă. Пĕр вăхăтра Борисоглебскра пролетариатăн аслă писателĕ Алексей Максимович Горький пурăннă. Унти йăласемпе çынсене вăл «Хуралçă» калавра сăнласа панă.

Хальхи вăхăтра Борисоглебскăн мухтавĕ вăл—В. П. Чкалов ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ Хĕрлĕ Ялавлă авиаци шкулĕ пулса тăрать. Ăна 20 çул каярах уçнă. Çав шкул пирĕн çĕршыв валли пиншер летчик вĕрентсе хатĕрленĕ. Кунта В. П. Чкалов та вĕреннĕ. Борисоглебскри шкултан вĕренсе тухнă 200 çын ытла Совет Союзĕн Геройĕн ятне илнĕ.

ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРÿ

1945 ÇУЛХИ ОКТЯБРĔН 8-МĔШĔНЧЕ ВКП(б) ЧĂВАШ ОБКОМĔН ЧЕРЕТЛĔ XXIII-МĔШ ПЛЕНУМĔ ПУЛСА ИРТРĔ.

ПЛЕНУМРА ВКП(б) ОБКОМĔН СЕКРЕТАРĔ И. М. ЧАРЫКОВ ЮЛТАШ «ТЫРĂ ПАМАЛЛИ ГОСУДАРСТВО ПЛАННЕ СРОКЧЕН ТУЛТАРАС ТАТА ЯЛХУÇАЛĂХ ĔÇĔСЕНЕ ТУСА ПĔТЕРЕС ТĔЛĔШПЕ РЕСПУБЛИКА ХĂЙ ÇИНЕ ИЛНĔ ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂСЕНЕ МĔНЛЕ ПУРНĂÇЛАСА ПЫНИ ÇИНЧЕН» ДОКЛАД ТУСА ПАЧĔ. ПЛЕНУМ ДОКЛАДА СÿТСЕ-ЯВСА ТИВĔÇЛĔ РЕШЕНИ ЙЫШĂНЧĔ.

ВКП(б) ЧĂВАШ ОБКОМĔ.

В. М. МОЛОТОВ БОЛГАРИ ПОСЛАННИКНЕ Д. МИХАЛЧЕВ ГОСПОДИНА ЙЫШĂННИ

Октябрĕн 6-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Болгарин Совет Союзĕнчи Чрезвычайнăй посланникне тата Полномочнăй министрне Д. Михалчев господина йышăннă. Йышăну Д. Михалчев господин хăйĕн верительнăй грамотисене СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне парас май пулнă.

В. М. МОЛОТОВ ФИНЛЯНДИ ПОСЛАННИКНЕ К. СУНДСТРЕМ ГОСПОДИНА ЙЫШĂННИ

Октябрĕн 6-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов Финляндин хăй патне малтанхи хут пынă Чрезвычайнăй посланникне тата Полномочнăй министрне К. Сундстрем господина йышăннă.

Деревянко генерал Мускава килни

Правительство чĕнсе илнипе октябрĕн 5-мĕшĕнче Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен Японири представителĕ Деревянко генерал-лейтенант Мускава килнĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш тĕррисене тĕрлес ĕçре ытларах палăрнă работницăсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Чăваш тĕррисене тĕрлес ĕçре тунă çитĕнÿсемшĕн çак работницăсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Александра Дмитриевна Анисимовăна.
2. Александра Кузьминична Кузьминана.
3. Александра Тарасовна Тарасовăна.
4. Александра Филипповна Филипповăна.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ
З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ
А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули.
1945 çулхи октябрĕн 8-мĕшĕ.

Хĕле кăтартуллăн хатĕрлекен

КАНАШ. Вагонсем юсакан завод коллективĕ иртнĕ çулсенче хĕле мĕнле хатĕрленнине шута илсе, кăçалхи хĕле хатĕрленме çуллах тытăнчĕ. Ку ĕçе эпир энергетика хуçалăхне юсассинчен пуçларăмăр. Заводри электростанци çуртне, унти оборудованисене, водопровода тата темиçе цехăн ăшă паракан системине пĕтĕмпех юсаса йĕркеленĕ.

Йывăç каскалакан, вагон кускăçĕсем тăвакан, кузнечнăй тата бандажнăй цехсен çурчĕсене хĕле пур енчен те хатĕрлесе çитернĕ. Çавăн пекех чугун çул училищин вĕренÿ кабинечĕсене те хĕле кирлĕ пек хатĕрленĕ. 30 станока тĕпрен юсанă.

Производство çурчĕсене хĕле хатĕрленисĕр пуçне завод коллективĕ больницăна, амбулаторие, ача садне, шкула тата рабочисен поселокĕнчи 8 çурта хĕле хатĕрлесе çитернĕ.

Апла пулсан та, заводра хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе тунă план тăрăх чылай ĕçсем пурнăçланмасăр юлчĕç. Механически комбинатăн хапхисене, чÿречисене, фонарĕсене тата товарнăй комбинатăн хапхисене юсамалла.

Хĕле хатĕрленес ĕçре ĕç вăйĕ тата материал çитменни пысăк чăрмав кÿрет. Анчах заводăн материалсем тăратакан пайĕ пĕтĕм çу тăршшĕнче те кирпĕч, замазка, нефтебит, кантăк тата çуртсен тăррисене витмелли япаласем те тупма пултараймарĕ.

Хĕллехи сивĕсем пуçланиччен нумай юлмарĕ. Çавăнпа та завод коллективĕн 1945—46 çулхи хĕле пур енчен те хатĕрленсе çитме пĕтĕм вăя тата шалти пур ресурсене те мобилизацилемелле.

Д. СУПЕРФИН,
Заводри главнăй механик.

Агитколлективсен ĕçне лайăхлатмалла

ЕТĔРНЕ. Кăташ ял Советĕнчи агитколлектив малтанхи вăхăтра хăйĕн ĕçне йĕркеллĕ, умра тăракан задачăсемпе çыхантарса туса пынă. Колхозниксем хушшинче чылай докладсемпе калаçусем туса ирттернĕ, агитаторсем хăйсен участокĕсенче тăтăшах хаçатсем вуланă, колхозсенче стена хаçачĕсемпе боевой листоксем кăларнă. Çапла вара партипе правительство постановленийĕсене çиĕнчех колхозниксем патне çитерсе, вĕсене кулленхи задачăсене пурнăçлама мобилизациленĕ. Анчах халĕхи вăхăтра çак агитколлектив пачах ĕçлеме пăрахрĕ.

Çураки вăхăтĕнче те, тырпул пухса кĕртнĕ вăхăтра та агитаторсем уя тухса курмарĕç. Çакна пула Кăташ ял Советне кĕрекен Мичурин ячĕпе тăракан, «Хĕрлĕ çăлтăр», «Пионер» колхозсем пур ĕçре те юлса пыраççĕ. Уйри тĕштырăсене пухса кĕрес ĕçе вăраха тăсса ячĕç, государствăна тырă памалли графика пурнăçлаймаççĕ. Паянхи куна вĕсем тырпул памалли плана 50 процент та тултарман.

ВКП(б) Обкомĕ йышăннă тăрăх, республикăри колхозсем уйри тырпулсене пухса кĕртмелли вунăкунлăха ирттерчĕç. Çакăн çинчен кунта колхозниксем пĕлмесĕрех юлчĕç. Колхозниксене тырпул пухса кĕртес ĕçе мобилизацилемен.

Районра малта пыракан «Дружба», «Победитель», Ленин ячĕпе тăракан колхозсем çĕрулми кăларса пĕтерсе государство умĕнчи парăмсене татрĕç. Кăташ ял Советĕнчи колхозсем вара халĕ çĕрулми кăларма та тытăнман.

Кăташ ял Советĕнчи колхозсем çакăн пек юлса пынин сăлтавĕ пĕтĕмпех колхозниксем хушшинче массăллă-ăнлантару ĕçне туса пыманнинче, вĕсен пĕтĕм вăйне умра тăракан ĕçсене тума мобилизацилеменнинче. Партин пуçламĕш организацийĕ (секретарĕ Дмитриев) агитациллĕ-массăллă ĕçе лайăхлатассишĕн тăрăшмасть. Агитколлектив руководителĕ пулса ĕçлеме çак ĕçе юратман, агитаципе пропаганда ĕçне йĕркелесе яма пултарайман Н. Степанова юлташа лартнă. Вăл агитаторсене пухса апрель уйăхĕнче икĕ канашлу туса ирттернĕ те çакăнпа лăпланнă. Çапла вара политикăллă-массăллă ĕç агитаторсене участоксем уйăрса панипех чарăнса ларнă. Агитаторсем хушшинче авторитетсăр, ĕçе пĕлмен çынсем те пур. Акă, А. Ижеева юлташа агитаци ĕçне кирлĕ пек туса пыманшăн, ĕçри йĕркесĕрлĕхсемшĕн комсомолран кăларнă. Çакна пĕлсе тăнă вăхăтрах парторганизаци ăна агитатор пулса ĕçлеме çирĕплетнĕ.

Ялта вулав çурчĕ те ĕçлемест. Вулав çурчĕн заведующийĕ Игнатьев вицĕ уйăх хушши ĕнтĕ нимĕн те туман. Вулав çурчĕн заведующийĕсем пĕрмаях улшăнса тăраççĕ. Пĕр апрель уйăхĕнче кăна вулав çурчĕн заведующине виçĕ хутчĕн улăштарнă. Çавăн пекех Кăкшăм тата Иванькково ял Совечĕсенчи агитколлективсемпе вулав çурчĕсем те япăх ĕçлеççĕ. Çак çитменлĕхсене ВКП(б) Етĕрне райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ Жальнова та, райсовет исполкомĕн вулав çурчĕсемпе ĕçлекен пайĕн заведующийĕ Уфимцев та лайăх пĕлеççĕ, анчах политикăллă ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

Ник. ЦВЕТКОВ.

Кулленхи кирлĕ таварсем туса кăларассине лайăхлатар

Çĕмĕрле—вăрçăченхи пилĕкçуллăхсенче ÿссе çитĕннĕ промышленноçлă çĕнĕ хула. Кунта темиçе пысăк предприяти шутланать. Унсăр пуçне райпромкомбинат, апат-çимĕç комбиначĕ, промысла кооперацин артелĕсемпе ытти мастерскойсем те пур. Хулапа юнашарах вăрман. Çапла вара Çĕмĕрле хулипе районĕнче ĕççыннисене валли кулленхи кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе пур тĕрлĕ майсем те пур.

Çак асăннă предприятисемпе артельсенче тата мастерскойсенче вăрçăченхи çулсенче ĕççыннисем валли кулленхи кирлĕ таварсем туса кăларнă, вĕсем вырăнти нушасен пĕр пайне тивĕçтерсе пынă. Анчах Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче Çĕмĕрлери предприятисемпе артельсем Хĕрлĕ Çар валли продукцисем туса кăларас тĕлĕшпе ĕçлерĕç.

Халĕ çĕршывра мирлĕ строительство тапхарĕ пуçланнă май, вăрçă суранĕсене хăвăртрах тÿрлетесси, хамăрăн пурнăçа вăрçăченхинчен те лайăхрах тăвасси — пирĕн умра тăракан чи малтанхи задача. Çак задачăна пурнăçа кĕртес тесен, промышленность предприятийĕсен, артельсемпе мастерскойсен кулленхи кирлĕ таварсем туса кăларассине анлăн сарса ямалла.

Вăрçă вăхăтĕнче фронт валли ĕçлесе тăнă чи пысăк предприяти—комбинат халĕ халăх хуçалăхне кирлĕ продукци тата ĕççыннисем валли кулленхи кирлĕ таварсем туса кăларма тытăнать. Чи малтанах кунта пукансем, сĕтелсем, шкафсем т. ыт. те туса кăларма палăртнă. Анчах комбинат çак ĕçе халех тытăнма тата ăна кирлĕ пек сарса яма пултараймасть-ха. Цехсенче пĕринче те чĕртавар çук. Улатăр вăрманпромхозĕ комбината вăрман памасть. ЧАССР Вăрман промышленность Халăх Комиссариачĕн Етĕрнерен 400 кубла метр юман тăратмалла пулнă, комбинат ăна та илеймен-ха. Кунта ĕçе вăрман хатĕрлев организацийĕсем чылай чăрмантарса тăраççĕ. Çакна та каласа хăвармалла: палăртнă япаласене туса кăларма комбинат хăй те пĕтĕмпех хатĕр мар. Комбинатра оборудованисемпе квалификациллĕ рабочисем те çитеĕксĕр.

Çĕмĕрлере райпромкомбинат та кулленхи кирлĕ таварсем туса кăларас тĕлĕшпе палла вырăн йышăнса тăрать. Унăн çамата йăвалакан механизациленĕ мастерской, çĕвĕ çĕлекен мастерской, атă-пушмак çĕлекен тата юсакан цехсем, тирсăран тăвакан мастерской пур. Кунта урапа-çуна, кустăрмасем те тунă, халĕ ăна татах та аслăлатма шутлаççĕ. Çакна май райпромкомбинат хăйĕн Баланти хăма çуракан завода ĕçе яма хатĕрленет. Сĕтел-пукан туса кăларас ĕçе самаях аслăлатма пăхнă. Анчах кулленхи кирлĕ таварсем туса кăларасси, ку ĕçе мирлĕ тапхăрти пек урăхлатса çĕнетесси вăраххăн пулса пырать. Мĕншĕн сăлтава кунта ĕç вăйĕ çитеĕксĕррипе ăнлантарса парасшăн. Анчах çак çитменлĕхе пĕтерес тесе нимĕн те тумаççĕ.

Индпошив мастерскойĕнче ĕçлекенсем хăйсем туса кăларакан продукци пахалăхне чылай лайăхлатрĕç. Мастерской август уйăхĕнчи плана 112 процент тултарчĕ. Бракер И. Крылов юлташ каласа панă тăрăх, кунта август уйăхĕнчен пуçласах пĕр брак та пулман. Мастерскойра 30 çын ĕçлет, анчах унăн çурчĕ питĕ пĕчĕккĕ, йĕркеллĕ ĕçлеме условисем çук. Райсовет исполкомĕпе хула Совечĕн мастерской валли йĕркеллĕрех çурт тупса пама тăрăшмалла.

Ĕççыннисем валли кулленхи кирлĕ таварсем туса кăларас ĕçе анлăн сарса ярас тĕлĕшпе ытти предприятисемпе артельсенче тата мастерскойсенче те чылай йывăрлăхсем тĕл пулаççĕ. Çакă вăл райсовет исполкомĕ ку тĕлĕшпе сахал интересленнинчен, вырăнти промышленность предприятийĕсемпе артельсене кирлĕ пек ертсе пыманнинчен килет.

Е. ВОЛКОВ.

Государствăна сĕт ытларах сутар

Кострома облаçĕнчи «XII-мĕш Октябрь» ялхуçалăх артелĕн колхозникĕсемпе колхозницисем Совет Союзĕнчи мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, выльăхчĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсене тата ялхуçалăх специалисчĕсене чĕнсе каланине пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем ăшшăн кĕтсе илчĕç. Кострома облаçĕнчи «XII-мĕш Октябрь» колхоз членĕсем чĕнсе каланине нумай колхозсенче хĕрÿллĕн сÿтсе-явса ырлаççĕ, хăйсем çине конкретнăй обязательствăсем илеççĕ. Малта пыракан Вăрнар районĕнчи «Самолет» колхоз государствăна сĕт памалли плана тултарса, планран ирттерсе 680 литр сĕт сутнă. Çак районри «Волга» колхозра та «XII-мĕш Октябрь» колхоз членĕсем чĕнсе каланине сÿтсе-явса ырланă.

— Мĕн чухлĕ аш-какай, сĕт-çу тата ытти продуктсем ытларах паратпăр, çавăн чухлĕ хамăрăн Тăван çĕршыва ытларах тĕреклететпĕр, тенĕ колхозниксем.

Пирĕн республикăри чылай колхозсем государствăна обязательнăй йĕркепе сĕт-çу парассине ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне Красноармейски районри колхозсем сĕт памалли плана 112,2 процент тултарнă. Çавăн пекех Çĕрпÿ, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Ишлей, Етĕрне, Калинино районĕсем те государство обязательствине çак кунсенче пурнăçлаççĕ. Сĕт-çу памалли плана тултарнă колхозсем кашни районрах вунăшаран шутланаççĕ.

Анчах та сĕт-çу промышленноçне ытларах сĕт-çу парас тесен, кашни колхозрах государствăна сĕт сутассине организацилемелле. Кострома облаçĕнчи «XII-мĕш Октябрь» колхоз членĕсем государствăна обязательнăй йĕркепе памалли плана тултарнă хыççăн, государствăна 25.000 литр сĕт сутма обязательство илнĕ. Вăрмар районĕнчи «Красная Кубня» колхоз членĕсем те государствăна обязательнăй йĕркепе сĕт памалли плана тултарнă хыççăн кашни сăвакан ĕне пуçне 10 литр сĕт сутма обязательство илнĕччĕ. Вĕсем хăйсен обязательствине ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Çавăн пекех Ишлей районĕнчи «Парикасси» колхоз та государствăна 10.000 литр ытла сĕт сутма пулнă. Çак колхозсен пахă примерне кашни колхозрах йышăнса илмелле.

Государствăна сутмалли сĕте çу заводĕсем, сепаратор пункчĕсем тата сĕт йышăнакан пунктсем илеççĕ. Государствăна сĕт сутассине обязательнăй поставкăна тултарнă хыççăнах организацилемелле. Государствăна сĕт сутас ĕçе колхозниксен, рабочисемпе служащисен те хутшăнмалла.

Государствăна планран ирттерсе сĕт сутнăшăн сĕт паракансене потребкооперации урлă апат-çимĕç тата промтаварсем: сахăр, конфет, чей, тăвар, супăнь, керосин, пусма-тавар, ут таврашĕсем, спичка, табак тата ытти таварсем те параççĕ. Государствăна сутнă 10 литр сĕтшĕн çак таварсене илме пулать: кондитери изделийĕсем—27 тенкĕлĕх, сахăр—18 тенкĕ те 50 пуслăх, пусма—67 тенкĕ те 50 пуслăх, чăлха тата çавăн пек япаласем—40 тенкĕ те 50 пуслăх, табак—185 тенкĕлĕх, ут таврашĕсем—81 тенкĕлĕх.

Çакăн пек йĕрке тупи колхозсемпе колхозниксене тата сĕт паракан ытти хуçалăхсене государство обязательствине хăвăртрах парса татма тата государствăна ытларах сĕт сутма хавхалантарать.

Чылай районсенче сĕт-çу хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекенсем, партипе совет организацийĕсем пулăшса пынипе, государствăна сĕт сутас ĕç тавра массăллă-ăнлантаруллă ĕçе анлăн сарса пырса, çак ĕçе ăнăçлă пуçарса янă. Çавна пула сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне государствăна сĕт сутмалли III-мĕш кварталти плана Чкаловски район 25,6 процент, Шăмăршă районĕ 23,4 процент, Елчĕк районĕ 21 процент, Калинино районĕ 23 процент, Тăвай районĕ 21 процент, Улатăр районĕ 23 процент тултарнă.

Çак вăхăтрах государствăна сĕт сутасси уйрăм районсенче ытла та çитеĕксĕр пырать. Уйрăмах Шăхасан, Канаш, Вăрнар, Октябрьски, Çĕмĕрле тата ытти хăшпĕр районсем государствăна сĕт сутас тĕлĕшпе чăтма çук начар ĕçлеççĕ. Çак районсем государствăна III-мĕш кварталта сĕт сутмалли плана пурĕ те 4—5 процент кăна тултарнă. Çак районсенчи çу заводĕсен директорĕсем ответлăха туйса ĕçлемеççĕ, государствăна сĕт сутас ĕç хăй тĕллĕн пулса пырасса шанаççĕ. Çавăн пекех çак районсенчи партипе совет организацийĕсем те вĕсене çителĕклĕ пулăшу парса пымаççĕ-ха.

Мирлĕ пурнăçпа пурăнакан халăхăн апат-çимĕç базине ÿстерес ĕçре сĕт-çу калама çук пысăк та паха вырăн йышăнать. Çавăнпа та государствăна сĕт сутас ĕçе хăй тĕллĕнех пулса пырасса шанса ларни питĕ сиенлĕ тата килĕшÿсĕр ĕç пулса тăрать.

Государствăна сĕт сутас ĕçре суту-илÿ организацийĕсем, уйрăмах потребкоопераци системи кирлĕ пек ĕçлемелле. Государство çак ĕç валли паракан таварсене вăхăтра вырăна, сĕт сутакансем патне çитермелле. Анчах та чылай районсенчи райсоюзсен çавранăçусăрлăхĕ ĕçе чылай чăрмантарать.

Сăмахран, Вăрнар, Советски, Муркаш районĕсенчи райсоюзсем çак вăхăта çитсе те государствăна сĕт сутакансене сутмалли чылай таварсене: керосина, тăвара, сахăра, кондитер изделийĕсене тата ыттисене те кÿрсе килмен. Куславкка тата Сĕнтĕрвăрри райсоюзĕсем вара çак таварсене лапсем тăрăх валеçсе парас ĕçе вăраха хăварнă. Куславкка районĕнчи Куславкка лапковĕн магазинĕнче сĕт паракансене сутма керосинсăр пуçне урăх нимĕнле тавар та çук. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Новинск лапковне вара пĕр тавар та кÿрсе килмен. Лапо магазинĕсенче государствăна сĕт сутнăшăн мĕнле промтаварсем тата мĕн чухлĕ панине те çырса хуман тата ун çинчен колхозниксене те кирлĕ пек ăнлантарса паман. Советски районра государствăна сĕт сутнăшăн промтоварсем сутас йĕркене пăснă. Сăмахран, 10 литр сĕт сутакана 9,5 литр керосин, 400 грамм супăнь тата 11 штук папирос обязательнăй йĕркепе панă. Çакăн пек ĕçлени, паллах, государствăна сĕт сутас ĕçе вăйлатмасть, ăна чăрмантарса çеç пырать. Сĕт сутакансене промтоварсем сутас йĕркене пăсса та пăсмалла мар, вăл йĕркене кашни колхозра мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене тата сăвакан ĕне усракан рабочисемпе служащисене тĕплĕн ăнлантарса памалла. Ку ĕçре вырăнти парти, совет тата комсомол организацийĕсем сĕт-çу хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекенсене тимлĕн пулăшса пымалла.

Халĕ колхозсемпе колхозниксен умĕнче ответлă задача—çĕршыври халăхпа Хĕрлĕ Çара выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем, промышленноçа чĕртавар ытларах парас задача тăрать. Çак задачăна пурнăçлас ĕçре государствăна сĕт сутни палла вырăн йышăнать. Çавăнпа та государствăна сĕт сутассине пысăк вырăна хурса, кашни районăн, кашни колхозăн тимлĕн ĕçлемелле.

Н. ЛЬВОВ,
Чăвашмаслопромăн управляющийĕ.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн пĕрремĕш сессийĕ çинчен Америкăри хаçатсем мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн сессийĕн результачĕсем çинчен Лондонран пашăрханса пĕлтереççĕ пулин те, çав калаçусем ăнăçманнишĕн Совет Союзне айăплама хăтланаççĕ пулин те, Америкăри хаçатсенче чылайăшĕнче Совет Союзĕн позицийĕ логика енчен тĕрĕссине йышăнаççĕ. «Нью-Йорк пост» хаçатăн умстатьинче çапла каланă: мĕншĕн США зонасĕм пирки тăракан ыйтава сÿтсе-явас ĕçе французсемпе китаецсене хутшăнтарасшăн пулчĕ-ши?—çакна ăнепле те ăнланса илме çук, мĕншĕн тесен «çав ыйтусем вĕсене нимпе те тÿрех пырса тивмеççĕ пулмалла». Союзлă виçĕ державăн руководителĕсен конференцине пухма сĕнни çинчен хаçат çапла çырать: «США хăйĕн халĕхи политикине тытса пыма пăрахиччен тата Совет Союзне хирĕç пыракан çынсемпе, панкрута тухнăскерсемпе, çыхăнса тăма пăрахиччен» çавăн пек конференци ăнăçлă пулма пултараймасть, тет; хаçат Югослави корольне Петра тата Греци корольне Георга асăнса илет.

Балтиморта тухакан «Сан» хаçатăн редакци çырнă статьинче Лондонри калаçусем пĕтсе ларнă пирки ытла хуйхарма кирлĕ марри çинчен каланă. Хаçат каланă тăрăх, калаçусем пĕтсе ларни пĕр-пĕринпе килешсе татăлас пĕтĕм шанчăка пĕтерсе лартрĕ тесе шутлани тĕрĕс пулмасть. «Сиксе тухнă тавлашулла ыйтава США-н тепĕр хут пăхса тухмалла та ăна ыйтăва татса памалла май çырса хумалла. Росси та çак лару-тăру çинчен сÿтсе-явĕ тесе шутлама пирĕн çителĕклĕ шанчăк пур. Вырăссем те, пирĕн пекех, пĕтĕм тĕнчипе мир туса хурасшăн».

«Нью-Йорк пост» хаçат çырнă пекех, радиообозреватель Стил та октябрĕн 3-мĕшĕнче çапла каланă: Балканри çĕршывсен ыйтăвне виçĕ державăн татса памалла тесе Молотов сĕннине США-па Англи мĕншĕн йышăнасшăн пулманни тĕлĕнтерет. Çак тавлашуллă ыйтупа Китай интересленмест пуль, тесе каласа, Стил французсене, пуринчен ытла Бидоа, айăплать: Бидо «тĕрлĕ майпа США-па Англие хăйсемшĕн усаллă мар позици. Совет Союзĕпе хирĕçтерсе яракан позици йышăнтарма тăрăшрĕ. Ку вăл йыта хăйĕн хÿрине мар, хÿри йыттине суллана пекех пулса тăрать. Франци хăйĕн шухăшне пурнăçа кĕртме пултарнă пирки ăна хăйне тÿрех интереслентермен ыйтусем пирки решенисем йышăнас ĕçрен пăрса яма пулать».

Совет Союзĕ Японие тăватă державăн представителĕсем тытса тăмалла тесе сĕнни çинчен Стил çапла çырать: «Американецсем часах çакна манса каяççĕ: Хĕрлĕ Çар Китайра японецсенчен ирĕке кăларнă çĕрен пысăкăшĕ американецсем Японипре хăйĕнче йышăннă çĕртен ытларах».

Радиообозреватель Серджио çапла каланă: Аргентинăн фашистла правительствине Хĕвеланăç енчи çурчăмăрти çĕршывсене пĕр-пĕринчен уйăрса яма чарас тесе, США кирлĕ мерăсем йышăнать; США Совет Союзĕн Балканри политикине критикăлас пулсан, вăл хăй тÿрĕ сулла пыманнине кăтартса парĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçат çапла çырать: пилĕк тĕп держава тĕрлĕ шухăшланин, принцип енчен илсен, ытла пысăк мар, государство деятелĕсен Лондонра тухса тăнă йывăрлăхсене сирсе яма пелмелле.

Çав хаçатсем йăвашшăн çырнă вăхăтрах «Вашингтон пост» Лондонри калаçусем пĕтсе ларнăшăн пĕтĕм айăпа Совет Союзĕ çине йăвантарма тăрăшса çырать.

Нью-Йоркра тухса тăракан «Дейли ньюс» хаçат, ĕлĕкхи пекех, Совет Союзне хирĕç пыракан шухăш-кăмăлсене вăйлатса яма тăрăшать.

«Крисчен Сайенс Монитор» хаçатăн корреспонденче ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен совечĕн пĕрремĕш сессийĕ çинчен

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 1-мĕшĕнче Трумэн президент палла виçĕ журналиста, çав шутра «Крисчен Сайенс Монитор» хаçатăн Вашингтонри корреспондентне Друммонда йышăннă. Друммонд хăйĕн «Крисчен Сайенс Монитор» хаçатра пичетленĕ статьинче çапла çырать: Лондонри конференци пĕтсе ларнă пирки Трумэн хуйхармасть, тесе калама пулать, вăл халĕ сиксе тухнă йывăрлăх нумая пымĕ, каярахпа, калаçса татăлма шанса, çĕнĕрен калаçма май пулĕ, тесе шутлать.

Друммонд каланă тăрăх, Трумэн Лондонри канашлура министрсене пĕр-пĕрипе килĕштерме хăтланни ăнăçманнине пĕчĕклетсе кăтартмасть, анчах та вăл Потсдамри опыта шута илсе, çапла шутлать: калаçса татăлма кирлине ăнланни —халь сиксе тухнă йывăрлăхсенчен вăйлăрах, тет. Америка правительстви васкама тата хăраса ÿкме шутламасть, вăл ыра кăмăлпа çĕнĕрен калаçма пуçлас тĕлĕшпе ĕçлеме хатĕр. Кунсăр пуçне, Пĕрлешÿллĕ Штатсем çакна лайăх ăнланса илчĕç: пилĕк державăн кашни канашлăвне пухас умĕн малтан тĕплĕн хатĕрленмелле, кун йĕрки пирки лайăх калаçса татăлмалла, правительствăсен представителĕсем пĕр-пĕринпе тĕл пулса калаçма пуçличчен çав правительствăсен пĕр-пĕрне хăйсен позицийĕсем çинчен лайăх каласа памалла.

Англи короле Бевина йышăнни

ПАРИЖ, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи королĕ 6-мĕш Георг хăйĕн Бальмораль замокĕнчен Лондона килнĕ хыççăн темиçе сехетренех ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Бевина йышăннă. Бевин короле ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен конференцийĕн результачĕсем çинчен каласа кăтартнă.

Америка çарĕсем Хоккайдо çине анна

ЛОНДОН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Дейли хулинчи радио çапла пĕлтернĕ: американецсен оккупаци çарĕсем Хоккайдо утравĕ çине аннă. Ку утрав Японин чи çурçĕрти утравĕ пулса тăрать.

Сидехара барона Япони премьер-министре пулма лартнă

ЛОНДОН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Сидехара барона Япони премьер-министрĕ пулма лартнă. Сидехара барон халĕ 73 çулта. Вăл 1924 çултан пуçласа 1927 çулччен тата 1929 çултан пуçласа 1931 çулччен Японин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулса ĕçленĕ.

Сидехара çапла каланă: Йосида ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕнчех юлать, ытти министрсем кăшт-кăшт пуласси темиçе кунтан пĕлтерĕпĕр, тенĕ.

Лавале суд туни

ПАРИЖ, октябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Судăн 2-мĕшпе 3-мĕш кунĕсенче—октябрĕн 5-мĕшĕпе 6-мĕшĕнче—суд Лавале допрос тума хăтланнă. Ăна тăшманпа пĕрлешсе Франпие хирĕç тăнă, тесе айăплаççĕ.

Судра Лаваль час-часах хирĕçнĕ. Суд ыйтнине хирĕç вăл е питĕ нумай каланă (час-часах тата хăйне панă ыйтусем çинчен мар, пачах урăх ĕçсем çинчен каланă), е, ывăнтăм тесе, вăхăт çитиччĕнех суд ларăвне хупма ыйтнă, е нимĕн шарламасăр ларнă, суд членĕсем ыйтнине хирĕç пĕр сăмах та каламан. Лаваль суда тем те пĕр каласа хур тунă, хаярланса унтан тем те пĕр ыйтнă, мана эсир тĕрĕс йĕркепе суд тумастăр, тесе хирĕçнĕ: çапла хăтланса, вăл суд ĕçне тасса пыма тăрăшнă. Лаваль хăй те çакна пытарса тăмасть: вăл хăйĕн судне Францири пĕтĕмĕшле суйлавсем петиччен тăсса пыма тăрăшать (ку суйлавсем Францире октябрĕн 21-мĕшĕнче пулса иртмелле).

Лаваль çав тери чарусăр хăтланнипе, суд темиçе хутчен те хăйĕн ларăвĕсене чарă-чарă лартнă. Суд председателĕ Лавале ĕнтĕ темиçе хутчен те асăрхаттарса каланă, суда хур тунăшăн ăна суд ларăвĕнчен темиçе хут та кăларнă. Октябрĕн 6-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен Лаваль тата тепĕр тесле хăтланнă. Вăл суд ларăвне пыма килĕшмен. Судра ун чухне свидетельсенчен ыйтма пуçламалла пулнă. Çав ларăва Лаваль адвокачĕсем те пыман.

Суд çапах та свидетеле пынă Альбер Лебренран. Франци президенчĕ пулнăскертен, ыйтса пĕлнĕ. Лебрен çапла каланă: 1940 çулхи июнь уйăхĕнче Лаваль мана эсĕ диверсисем тăватăн, Франпие сутатăн, тесе айăплама хăтланчĕ, тенĕ. Кун хыççăн суд хăйĕн ларăвне октябрĕн 8-мĕшĕччен хупнă.

Франци хаçачĕсем ку суд çинчен питĕ нумай çыраççĕ. Хаçатсем нумайăшĕ çакна палăртаççĕ: Лаваль суд авторитетне варалама хăтланать, теççĕ. «Комба» хаçат çапла çырать: судра пыракан кĕрешÿ Лавальпе суд ĕçне тĕрĕс тума тăрăшакан çынсем хушшинчи кĕрешÿ мар, кунта пыракан кĕрешÿ вăл [illegible] Франци хушшинче пыракан кĕрешÿ. «Франс-Тирер» ятлă хаçат çапла çырать: Лаваль вăл политикăпа дипломати кукри-макрисенче чееленсе çитнĕ çын, тет, вара çакна астутарса çырать. Лаваль 1942 çулта радио тăрăх тухса каланă чухне çапла каланă: «Эпĕ Германи çĕнтертĕр тесе тăрăшатăп, тенĕ». «Çав кун,—тесе çырать хаçат,—Лаваль хăйне хăй приговор çырса хунă».

Квислинг ĕçĕ

ЛОНДОН, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Осло хулинчен çапла пĕлтерет: Норвеги прокурорĕ Шьедт каланă тăрăх, Квислингăн хăйне вĕлерме йышăннă приговора парахăçа кăларма ыйтса çырнă заявление Норвеги верховнăй судĕнче октябрĕн 9-мĕшĕнче пăхса тухма пуçлĕç. Вăл ĕç виçĕ кун пырĕ. Квислингăн 5 министрне ноябрь уйăхĕнче суд тума пуçлĕç, тенĕ.

Германин Америка оккупацилесе тăракан пайĕнче вăрçă преступникĕсене суд тума пуçласси

ЛОНДОН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: октябрĕн 8-мĕшĕнче Висбаден хулинче вăрçă преступникĕсене суд тума пуçлаççĕ. Ку вăл Америка оккупацилесе тăракан тăрăхри пĕрремĕш пысăк суд пулать. Ултă арçынпа пĕр хĕрарăма айăплаççĕ. Вĕсем халăха вĕлерме тунă лагерьсенчен пĕринче 400 поляка вырăса вĕлернĕ.

Вăрçă преступникĕсене Будапешта илсе пынă

БУДАПЕШТ, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Зацельбургран Будапешта Венгрин «премьерĕ» пулнă Салашие тата вăрçă преступникĕсене 10 çынна самолетпа илсе пынă. Вĕсене союзниксен çарĕсем тытса арестленĕ пулнă. Вĕсем хушшинче Бардоши, Имреди, Ярош, Ременьи-Шнеллер, Лукач тата ыттисем те пур. Вĕсемпе пĕрлех вĕсен сутăнчăкла ĕçне кăтартса паракан нумай документсене илсе пынă.

«Сапад Неп» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Венгрири Халăх сучĕн председателĕ çапла каланă: сутăнчăксене октябрь уйăхĕн вĕçĕнче суд тума пуçлаççĕ.

Çав хаçат пĕлтернĕ тăрăхах, Америкăн çар влаçĕсем Венгри влаçĕсен аллине вăрçă преступникĕсене 546 çынна памалла. Вĕсене парас ĕçе транспорт çителĕксĕрри кăна кансĕрлесе тăрать.

Греци правительствин суйлавсем пирки йышăннă решенийĕ

АФИНЫ, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Грецин телеграф агентстви çапла пĕлтерет: октябрĕн 5-мĕшĕнче Греци министрĕсен совечĕн ларăвĕнче суйлавсене январĕн 20-мĕшĕнче ирттерме тата уй çинчен халăха халех пĕлтерсе хума йышăннă.

Афинăра полицейскисем юри хирĕçтерсе ярса юн юхтарни

АФИНЫ, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 6-мĕшĕнче Афины хулинче Омония площадĕнче каçхине 4-мĕш полици участокĕ патĕнче юнлă тытăçу пулса иртнĕ. тытăçура 15 çынна амантнă.

Тытăçу çапла пуçланса кайнă: пĕр Бардио ятлă полицейски урамра пирусcем сутса тăракан ачана хĕнеме тытăннă. Икĕ салтак çав ача хутне кĕнĕ. Полицейски револьверпа персе пĕр салтака амантнă, вара хăй полици участокне тарса пытаннă. Аманнă ача тавра халăх пухăннă. Пуханнă халăх полипи çапла хăтланнипе тарăхса кайнă. Çав халăха полици участокĕн чÿречинчен автоматсемпе пеме пуçланă. Çав вăхăтрах халăх хушшине граната пăрахнă.

Хаçатсем çырнă тăрăх, Грецие гитлеровецсем оккупацилесе тăнă вăхăтра çав Бардио гестапо агенчĕ пулса ĕçленĕ. Вăл кăтартусем илме Берлина та кайса килнĕ пулнă. Бардио монархистсен организацийĕнче тăрать.

Египет правительствин членĕ калани

КАИР, октябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Египет парламентĕнчи депутатсен палатин ют çĕршыв ĕçĕсен комиссийĕн председателĕ Риад Бей Англи çарĕсене Египета яни çинчен Рейтер агентстви пĕлтернĕ пирки Лондонра çапла каланă: ют çĕршывсен çарĕсене Египетран илсе кайма ыйтас тĕлĕшпе Египетри пур партисем те пĕр пек шухăшлаççĕ, тенĕ. Риад Бей каланине хаçатсем пичетлесе кăларнă.

Египетра вăрçă вăхăтĕнчи йĕркене парахăçа кăларнă

КАИР, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Египет королĕ Фарук Египетра вăрçă вăхăтĕнчи йĕркене октябрĕн 7-мĕшĕнчен пуçласа парахăçа кăларасси çинчен калакан указа ала пуснă.

Китайри демократиллĕ лигăн съезчĕ

ЧУНЦИН, октябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). «Синьхуажибао» хаçат çапла пĕлтерет: октябрĕн 1-мĕшĕнче Чунцин хулинче Китайри демократиллĕ лигăн чрезвычайнăй съезчĕ уçăлнă. Съезда 50 делегат пуханнă.

Съезда Лигăн председателĕ Чжан Лань уçнă. Вăл съезда уçнă чух каланă сăмахĕнче юлашки çул хушшинче лига ÿссе вăйлăланнине палăртнă. Чжан Лань малалла çапла каланă: эпир шалти йĕркене лайăхлатас тĕлĕшпе хамăр çине пысăк ответлăх илетпĕр. Эпир мирлĕ строительствăшăн тата демократиллĕ пĕрлĕхшĕн тăратпăр, урăхла каласан, эпир чăн-чăн демократиллĕ тытăм йĕрки туса хума ыйтатпăр. Çакă вăл Китай гражданĕсен нумайăшĕ ыйтни пулса тăрать. Эпир çак лига урлă халăх ыйтнине тата халăх мĕнле шухăшланине палăртса тăратпăр. Пирĕн вăйсем малалла питех те йышлă пулĕç, пирĕн умра лайăх пурнăç пуласси курăнса тăрать».

Кĕскен

▲ Бразили правительстви Польша халăх пĕрлĕхĕн правительствине йышăнни çинчен пĕлтернĕ.

▲ Океан çинче вилсе çÿрекен 14 грузовой суднăна сутăн илме май пама, США Бразилие 10 çуллăха 38 миллион доллар кивçен панă. (ТАСС).

Эйзенхауэр Гитлер çинчен калани

ЛОНДОН, октябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, Эйзенхауэр генерал Голландие пырсан Голландии корреспонденчĕсене çапла каланă: ĕлĕк эпĕ Гитлер вилнĕ тесе шутланă пулсан, халь Гитлер чĕрĕ пурăнать тесе шутлатăп, тенĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Спецторга ялан ĕçлеме суту-илÿ тĕлĕшпе ĕçлекен старши бухгалтер, столовăйсем тĕлĕшпе ĕçлекен старши бухгалтер, счетоводсем, магазин директорĕсем, склад заведующийĕ тата сут тăвакан кирлĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Спецторг ЧАССР.

Чăваш АССР-ĕн Госстрах Управленийне çакăн пек работниксем кирлĕ: ревизорсем, старши инспекторсем, инспекторсем, техник-строитель, секретарь-машинистка тата статистик.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 10, Управление Госстраха Чуваш АССР.
3—3.

Тарасасем юсакан завода Шупашкарти, Канашри, Улатăрти, Етĕрнери, Çĕмĕрлери тата Чкаловскри тарасасем юсакан мастерскойсенче ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: слесарьсем, тараса мастерĕсем, жестянщиксем, лудильщиксем тата хуралçăсем. Çав ĕçсене вĕренекен ученниксене те илеççĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, улица Ворошилова, 46.
5—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-99, промышленность пайĕн—3-97 ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — [illegible]-23.

НТ 09047 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. 6. 59 42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.